26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАРТ
10
ЮНКУН
55(6292) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Кашни колхозра ачасем валли ясли уçар

Иртнĕ çулта ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх организацилесе ирттерме, тырпулсене вăхăтра пуçтарса кĕртме колхозсенче яслисемпе площадкăсем организацилени пысăк пулăшу пачĕ. 1942-мĕш ялхуçалăх çулĕнче Чăваш республикинчи колхозсенче 1.031 ясли ĕçлерĕ, вĕсенче 35.271 ача пурăнчĕ. Ачасен площадкисене 552 колхозра организациленĕ, вĕсенче пурĕ 20.915 ача пулнă.

Ачасен яслийĕсемпе площадкисене организацилес ĕç иртнĕ çул чылай районсенче аван пулса пычĕ. Тĕслĕхрен, Шăхасан районĕнче 67 колхоз. Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче кунта 27 площадка ĕçлерĕ. Уйхирти ĕççене туса иртернĕ вăхăтра 2.594 ача куллен площадкăсенче пулнă. 59 колхозра ачасен яслийĕсем ĕçленĕ. Вĕсенче куллен 1.681 ача пулнă.

Колхозсенче ачасем валли яслисемпе площадкăсем уçни çĕршер хĕрарăма колхоз производствинче туллин ĕçлеме май туса пачĕ. Хăйсен ачисене яслисемпе площадкăсене хăварса, вĕсем куллен иртен пуçласа каçченех суха турĕç, утă çулчĕç, тырă вырчĕç, авăн çапрĕç. Ачасен яслийĕсемпе площадкисене организацилес ĕç Ишлей, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар районĕсенчи колхозсенче те тивĕçлĕ выранта тăчĕ. Ку районсен руководителĕсем, колхозсен председателĕсем ĕç вăхăтĕнче ачасен яслисене организацилени хĕрарăмсене канăçлăн ĕçлеме пулăшнине шута илнĕ. Анчах çакна шута илмен руководительсем те пулчĕç. Канаш, Пăрачкав, Елчĕк, Первомайски райсовет исполкомĕсем колхозсенче ачасем валли яслисемпе площадкăсем уçас ыйтупа кирлĕ таран интересленмерĕç, вĕсен çĕрĕç тата çутĕç пайĕсем яслисемпе площадкăсем организацилес ĕçе йĕркеллĕн ертсе пымарĕç.

Уйхирти ĕçсем пуçланас вăхăт çывхарса килет. Тепрер уйăхран çуракине тухмалли вăхăт çитсе тăрĕ. Колхозсенче яслисемпе площадкăсем уçма хатĕрленес пулать. Хĕрарăмсем—колхозра тĕп вăй пулса тăчĕç. Вĕсем ырми-канми ĕçленипе иртнĕ çул пирĕн республикăри колхозсем акмалли çĕр лаптăкне чылай аслăлатрĕç, уйхирти ĕççене вăхăтра тата лайăх пахалăхпа туса пычĕç. 1943 çулти çураки колхозниксемпе колхозницăсенчен тата нумайрах вăй хурса ĕçлеме ыйтать. Ĕç вăйĕ тата туртăм вăйĕ сахалланнă пулсан та, акмалли çĕр лаптăкне кăçал пирĕн татах та аслатмалла. Çуракине вăхăтра, агротехникăна çирĕп пурнăçласа пынипе туса иртермелле. Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерÿллĕ наступленине вăйлатса пыма пуян тырпул туса илмелле. Хĕрарăмсене ĕçлеме лайăх условисем туса пани—колхозсенче çуракине хăвăрт та лайăх туса иртерме май парĕ.

Ачасен яслийĕсемпе площадкисене кăçал колхозсенче тата нумайрах организацилемелле пулать. Чăваш АССР Совнаркомĕ «1943-мĕш ялхуçалăх çулĕнче республикăри кохозсенче ачасен яслийĕсемпе площадкисене организацилесси çинчен» постановлени йышăнса, райисполкомсене контрольнăй цифрсем кăтартса пачĕ. Республикăри колхозсенче кăçал 1.561 ясли, 1.558 площадка ĕçлемелле. Яслисенче 37.500 ача пăхса усрамалла, площадкăсенче 3—7 çулти ачасем пурĕ 41.095 ача пурăнмалла. Партипе правительство ыйтăва çапла лартаççĕ: ĕç вăхăтĕнче кăçал кашни колхозра ачасен яслийĕ, площадки пулмалла, кашни ĕçлеме пултаракан ачаллă хĕрарăма колхоз производствинче туллин ĕçлеме май туса памалла.

Райсовет исполкомĕсем, колхоз председателĕсем çураки пуçланнă тĕле колхозсенче яслисемпе площадкăсем уçма çуртсене, яслисемпе площадкăсен оборудованине хатĕрлесе çитермелле, апат-çимĕç продукчĕсене уйăрса хумалла.

Çуракине тума колхозри чи лайăх ĕçлекен пултаруллă хĕрарăмсене хутшăнтарас пулать. Хĕрарăмсене ĕçе тухма пĕчĕк ача пурри чарса ан тăтăр. Колхозница пĕтĕм вăйне хурса ĕçлессишĕн хыпса çунать пулсан, унăн ачисем çураки вăхăтĕнче те яслире, площадкăра пулччăр.

Иртнĕ çулта малта пыракан колхозсенче ачасен яслийĕсем çуракине тухнă кунах ĕçлеме пуçларĕç. Тÿрех калас пулать, вăл колхозсем çурхи тырăсене чи кĕске срокра акса хăварчĕç, пуян тырпул туса илчĕç.

Яслисемпе площадкăсенче ачасене пăхса усракан кадрсем хатĕрлесси паян тумалли ĕç пулса тăрать. Наркомпрос, Наркомздрав тата вĕсен районсенчи органĕсем яслисенче ĕçлеме кăçал кĕске срокла курссенче 838 воспитательница вĕрентсе кăлармалла. Курссенчен вĕренсе тухнă тата иртнĕ çул яслисенче ĕçленĕ воспитательницăсемпе семинарсем туса ирттермелле.

Ачасен площадкисенче ĕçлеме: площадкăсен ĕçне йĕркелесе пыма тата руководительницăсем пулма пурĕ 2.927 çын кирлĕ пулаççĕ. Халĕ 1.712 çынна çеç вĕрентсе хатĕрленĕ-ха. Ытти 1.215 çынна Наркомпроспа Наркомзем çак уйăхсенчех вĕрентсе хатĕрлемелле.

Яслисемпе площадкăсенче ĕçлеме колхозницăсен ачасемпе ĕçлеме пĕлекен тата шанчăклă çынсене уйăрмалла. Вĕсем вăтам шкулсенче вĕренекен çамрăк хĕрачасем е йывăр ĕçе тухма пултараймăн, анчах ĕçлеме юратакан, тÿрĕ кăмăллă колхозницăсем пулма тивĕç. Вĕсене пурне те яслире е площадкăра ĕçлеме колхозницăсен пухăвĕнче суйласа çирĕплетни кирлĕ. Яслисене лайăххрах организацилес, ачасене кирлине йăлтах туса парас ĕçе колхозницăсен активне анлăнрах явăçтармалла. Учительсемпе учительницăсем, ача сачĕсемпе çурчĕсенче ĕçлекен работниксем енчен колхозри яслисене организацилес тĕлĕшпе колхозницăсене пулăшу пани кирлĕ. Учительсем ертсе пынипе пионерсен, тимур командисен ачасем валли вылямалли япаласем туса хатĕрлемелле.

Партипе комсомол райкомĕсен, райсовет тата ялсовет исполкомĕсен колхозсенчи яслисемпе площадкăсен ĕçне куллен ертсе пыни кирлĕ. Вĕсене вăхăтра уçассишĕн тăрăшмалла. Колхозницăсем хушшинче ăнлантаруллă ĕçе çĕклемелле, ăна куллен туса пымалла.

Китай посолне Фу Бин-Чан господина В. М. Молотов йышăнни

1943 çулхи мартăн 8-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Китай республикин СССР-ти Чрезвычайнăй тата полномочнăй çĕнĕ посолне Фу Бин-Чан господина йышăннă.

Колхозсем валли тимĕрçĕсем вĕрентсе хатĕрлесси

Колхозсене тимĕрçĕсем питех те кирлине шута илсе, Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри промартельсенче колхозсем валли тимĕрçĕсем вĕрентсе хатĕрлеме йышăнчĕ. Çав постановлени тăрăх промкооперации системинчи промартельсем кĕске вăхăт хушшинче 200 çынна тимĕрçĕ ĕçне вĕрентсе кăлармалла. Тимĕрçĕсен вĕренÿ курсĕ икĕ уйăха пымалла. РСФСР Совнаркомĕн промкооперации управленийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйне Степанов юлташа тата ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссарне Малов юлташа тимĕрçĕсене 1943 çулхи мартăн 15-мĕшĕнчен пуçласа вĕрентме тытăнма хушнă.

Райсовет исполкомĕсене тимĕрçĕ çук колхозсенчен промартельсен мастерскойĕсене вĕренме халех çынсем ямалла. ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов юлташăн, промкооперации управленийĕн уполномоченнăйĕ Степанов юлташăн тата промартельсен председателĕсен çав курссенче вĕренекенсене пурăнма лайăх условисем туса памалла. Совнарком колхозсене курсра вĕренекенсене вĕреннĕ вăхăтра кашни кунĕшĕн пĕрер ĕçкунĕ шута çырма сĕнчĕ. Курсран вĕренсе тухнă тимĕрçĕсем статистика комиссийĕ витĕр тухмалла.

Колхозсем валли тимĕрçĕсем хатĕрлес ĕç тăкакĕсене, ЧАССР Совнаркомĕ 1943 çулхи февралĕн 26-мĕшĕнче йышăннă постановленипе, колхозсен тÿлемелле, курса хăйсен çыннине вĕренме янă колхозсем тÿсмелле, вĕсен тимĕрçĕсене вĕрентекен промартельсемпе тунă договорсем тăрăх укçа тÿлемелле.

Райзо заведующийĕсем, МТС директорĕсем, райсовет исполкомĕсен уйрăм колхозниксене тимĕрçĕ ĕçне МТС-сен тимĕрçĕ лаççисенче, çав шутра районти промышленноç предприятийĕсенче вĕрентсе те тимĕрçĕсем хатĕрлемелле.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 8-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Мартăн 8-мĕшĕнче пирĕн войскăсем икĕ кун хушши вăйлăн çапăçнă хыççăн **Сычевка** хулипе чугунçул станцине йышăнса илнĕ. (**Вязьма** хулинчен çурçĕреллерехре).

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Мартăн 7-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче войскăсем тата грузсем тиенĕ 200 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 20 батарейине пусарнă, боеприпассен складне тата горючи складне сирпĕнтерсе янă, тăшманăн чугунçул эшелонне çĕмĕрнĕ.

* * *

Тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, пирĕн войскăсем хаяр çапăçусем хыççăн Сычевка хулипе чугунçул станцине йышăнса илнĕ (Вязьма хулинчен çурçĕреллерехре).

Гжатскран хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 11 пункта йышăнса илнĕ.

* * *

Оленинăран кăнтăралларахра пирĕн войскăсем малалла кайса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски чаçăн пĕр участокĕнче нимĕçсем темиçе хут та контратака тунă. Совет боецĕсем вĕсене аркатса ывăтса янă. Çак çапăçура нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. 2 оруди, 22 пулемет тата винтовкăсем, автоматсем, боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем тăшмана хирĕç персе тăнă. Совет артиллерисчĕсем нимĕçсен 20 дзочĕпе блиндажне ишĕлтернĕ, артиллерин 10 батарейине тата минометсен 8 батарейине пусарнă. Тăшманăн 12 автомашинине тата пĕр самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсен икĕ батальона çити пехоти халăх пурăнакан пĕр пункта тытса илме хăтланнă. Гвардин старши лейтенанчĕ Якубов командир пулса ертсе пыракан пирĕн подразделенисем гитлеровецсене вирлĕн контратакăланă. Тăшманăн вăйĕ йышлăрах пулнă пулсан та, штык вĕççĕн çапăçнине тÿсеймесĕр, вăл васкаса каялла чакнă. Пирĕн боецсем нимĕçсен 180 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, 12 пулемет тата 100 ытла винтовка тытса илнĕ.

* * *

Севскран хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Халăх пурăнакан пĕр пунктра пирĕн боецсем тăшманăн гарнизонне хупăрласа илнĕ. Хĕçпăшала пăрахма килĕшмен гитлеровецсене пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 250 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче Н-ски гвардейски соединенин чаçĕсем тăшманăн вăйлă тĕреклетнĕ позицийĕсене тытса илнĕ. Хаяр çапăçура нимĕçсен пехотин пĕр батальонне яхăн пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем тытса илнĕ трофейăсем хушшинче 10 танк тата 12 оруди пур.

Совет летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче тата тăшманăн аэродромĕсенче нимĕçсен 30 самолетне пĕтернĕ. Кунсăр пуçне пирĕн зенитнăй артиллери тăшманăн 11 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Калинин облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ халăх пурăнакан пĕр пысăк пунктри нимĕç гарнизонне пырса тапăннă. Гитлеровецсене вĕлерсе пĕтерсе, партизансем халăх пурăнакан çав пункта тытса илнĕ. Каç пуласпа нимĕçсем партизансене хирĕç икĕ рота пехота янă. Тăшман контратакине партизансем сирсе пăрахнă, 100 гитлеровеца ытла вĕлернĕ. Калинин облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ чугунçул çине минăсем хурса тухнă. Фронт линийĕ патне пыракан нимĕç бронепоезчĕ ÿпĕнсе кайнă. Паровоз тата темиçе бронеплощадка ванса пĕтнĕ.

* * *

Курск облаçĕнчи Малоархангельск районĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем мирлĕ пурăнакан халăха 1.000 çын ытла персе е çакса вĕлернĕ. Оккупаци вăхăтĕнче фашистсем Малоархангельск хулипе унăн çывăхĕнчи ялсенчен Германи каторгине 2.400 çынна вăйпа хăваласа кайнă. Хуларан тухса тарас умĕн гитлерла бандитсем икĕ вăтам шкула, педагогика училищине, кино-театра, районри библиотекăна, больницăна, ачасен çуртне, ачасен консультацине тата ытти нумай çуртсене çунтарса янă.

* * *

Пильзен районĕнче (Чехословакия) чех патриочĕсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта яма хатĕрленĕ боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Брно хулинче хĕçпăшалланнă чехсен ушкăнĕ нимĕç гаражне тапăннă. 18 гитлеровеца вĕлернĕ, 15 автомашинăна çунтарса янă. Прага çывăхĕнче чех патриочĕсем нимĕç чаçĕн штабне бомба пăрахнă. Взрыв пысăк сиен кÿнĕ. 200 гитлеровец ытла вилнĕ е аманнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

ВЫРАНТИ ТОПЛИВАНА ХАТĔРЛЕСЕ ТУРТТАРАС ТĔЛĔШПЕ ПЫРАКАН СОЦИАЛИЗМЛĂ АМĂРТАВĂН ИТОГĔСЕМ

Чăваш АССР Совнаркомĕ вырăнти топливăна хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе пыракан социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи февраль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Кÿкеç райлесзагĕнчех хăвармалла тунă (директорĕ Федоров юлташ, Шупашкăр райсовет исполкомĕн председателĕ Миронов юлташ) тата ĕçре уйрăмах палăрнă работниксене премилеме райлесзага 10.000 тенкĕ укçа памалла тунă. Райлесзаг февраль уйăхĕнче вутă хатĕрлемелли плана хатĕрлес енĕпе 130,3 процент, турттарас енĕпе 149,8 процент тултарнă. Февраль уйăхĕнче вутă хатĕрлемелли плана ирттерсе тултарнăшăн, çавăн пекех тата район 1943 çулхи пĕрремĕш квартал планне хатĕрлес енĕпе 76,7 процент, турттарас енĕпе 110,1 процент тултарнăшăн Шупашкар райсовет исполкомĕн председателĕн заместительне Шульдяков юлташа тата райлесзаг директорне Федоров юлташа райлесзага панă укçаран пĕр уйăхри ĕçукси чухлĕ преми памалла тунă.

Тăвай леспромхозне (директорĕ Кириллов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Федоров юлташ) ĕçре палăрнă работниксене премилеме 5.000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Çакăнпа пĕрлех Совнарком Вырăнти топливо промышленность управленийĕн Улатăр, Вăрнар, Çĕмĕрле, Вăрмар леспромхозĕсем, Куславкка, Комсомольски, Октябрьски тата Пăрачкав райлесзагĕсем февраль уйăхĕнче пачах çителĕксĕр ĕçленине палăртнă.

Совнарком Вăрнар, Çĕмĕрле, Вăрмар, Куславкка, Комсомольски, Октябрьски, Пăрачкав райсовечĕсен исполкомĕсем тата Улатăр хула Совечĕн исполкомĕ Чăваш АССР Совнаркомĕ кăçалхи февралĕн 6-мĕшĕнче йышăннă постановление пурнăçа кĕртменнине кăтартса панă тата вĕсене 1943 çулхи пĕрремĕш кварталта вутă хатĕрлемелли плана пурнăçа кĕртмелли мерăсене васкавлăн йышăнма хушнă.

Совнарком Вырăнти топливо промышленность управленин начальникне Стуриков юлташа, Чăвашлесзаг тресчĕн управляющине Чернов юлташа тата райсовет исполкомĕсен председателĕсене Вырăнти топливо промышленность управленийĕн Шупашкар, Улатăр тата Канаш леспромхозĕсем вутă хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе панă плана пурнăça кĕртмелле тумашкăн татăклă мерăсем йышăнма хушнă.

Шкул ачисем кĕл пухаççĕ

СЕНТЕРВАРРИ. Шуршăлти туллимар вăтам шкулĕнче вĕренекен ачасем уроксем хыççăн тата кану кунĕсенче колхозсене вырăнти удобренисем пухса хатĕрлеме пулăшаççĕ. «Социализм» колхоза шкулта вĕренекен ачасем 18 центнер кĕл тата 15 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса панă. Чкалов ячĕпе тăракан колхозра ачасем 20 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 19 центнер кĕл пуçтарнă.

Н. Константинов.

Тăван çĕршыва нимĕç захватчикĕ сенчен хÿтĕлесе хăварас шухăшкăмăл социализмлă çĕршывăн хастарлă воинĕсене чаплă çĕнтерÿсем тума ертсе пырать. Чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕсем нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсене хирĕç отечественнăй вăрçăн пур фрончĕсенче те çапăçаççĕ. Ытти халăхсен ывăлĕсем пекех, вĕсем пур çĕрте те паттăрлăхпа хăюлăх кăтартаççĕ. Чăвашсенчен 1.475 çынна Правительство орденсемпе медальсем парса наградăланă. Вĕсен хушшинче чăваш халăхĕн 6 ывăлĕ Совет Союз Геройĕсем—Федот Орлов, Мирон Ефимов, Геннадий Габайдулин, Вячеслав Винокуров, Борис Васильев тата майор П. В. Лаптев юлташсем пĕтĕм çĕршывĕпе чапа тухрĕç.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: СОВЕТ СОЮЗĔН ГЕРОЙĔ—ПИРĔН ПАТТĂР ЗЕМЛЯК МАЙОР П. В. ЛАПТЕВ ЮЛТАШ.

М. Беркович фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Совет Союзĕн Геройĕ капитан Ф. Н. Орлов Шупашкарта

Совет Союзĕн Геройĕ капитан Ф. Н. Орлов юлташ, тăван ялĕнчен тавăрăннă хыççăн, Н-ски заводăн коллективĕпе тĕл пулчĕ. Кунта вăл цехсене кĕрсе, рабочисен ĕçĕпе паллашрĕ. Рабочисем паттăр земляка хăйсем фронт заказĕсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен каласа параççĕ. Вĕсем Орлов юлташран фронтри ĕçсем çинчен ыйтса пĕлесшĕн.

Халăхăн паттăр ывăлĕ Хĕрлĕ Çар халĕ нимĕçсен фашистла çарĕсене хаярран аркатса пыни çинчен, хăйĕн боевой ĕçĕсем çинчен каласа парать.

— Халăх пире хăватлă машинăсем шанса панă, ылханлă тăшмана пĕтермелли хĕçпăшалсемпе боеприпассем, апат-çимĕçсем парса тăрать. Халăх пире, Хĕрлĕ Çарăн воинĕсене, хăйĕн пурнăçне хÿтĕлес ĕçе шанса панă. Халăх шаннине эпир тÿрре кăларăпăр.

Çак сăмахсем герой хăйĕн халăхĕ умĕнче тупа туса калана сăмахсем пулса тăраççĕ.

Чапа тухнă земляка пур çĕрте те кăмăлласа кĕтсе тăраççĕ. Рабочисем патĕнчен Ф. Н. Орлов юлташ пионерсем патне пычĕ. Хĕрлĕ Çар çуртĕнче ачасен хаваслă сассисем илтĕнеççĕ. Çамрăк патриотсен куçĕсем савăнăçпа çунса тăраççĕ. Вĕсем патĕнче — сталинла сокол Совет Союзĕн Геройĕ капитан Ф. Н. Орлов. Хăюллă вĕçевçĕ каласа панисене ачасем шăп пулса итлеççĕ. Федот Никитич нимĕçсен нумай самолечĕсемпе танкĕсене, салтакĕсене пĕтерсе тăкни çинчен илтсен, ачасем хĕрсех ала çупаççĕ.

— Лайăх вĕренĕр, ачасем! Эпир сире шкулта лăпкă вĕренме май паратпăр, сирĕн телейлĕ ачалăха хÿтĕлетпĕр. Вĕренĕр, паттăр çынсем пулăр!

Ачасем героя ун ячĕпе хатĕрленĕ парнесем параççĕ.

Ĕнер каçхине Ф. Н. Орлов юлташ редакцинче пичет работникĕсемпе, художниксемпе, писательсемпе тĕл пулчĕ.

Çулпуçăн приказне ĕçре пурнăçлаççĕ

КАНАШ, мартăн 9-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Сталин юлташăн приказĕ патриотизмлă тата производсвăллă çĕнĕ çĕкленÿ пуçарчĕ. Районри ĕççыннисем нихăçан пулман пек çĕкленÿпе ĕçлеççĕ. Малта пыракан колхозсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене вĕçлеççĕ.

Янкăлчри Каганович ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Иванов юлташ) районра чи малтан çуракине хатĕрленсе çитрĕ. Унта Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă уяв тĕлне мĕн пур вăрлăха сортласа хунă, вăрлăхсен шăтас пахалăхне тĕрĕслесе пăхнă. Вăрлăхсен 99 проценчĕ лайăх шăтнине палăртнă. Колхоз плугсене, сеялкăсене тата сÿресене йăлтах юсаса лартнă. Уя 5.450 лав тислĕк кăларнă. Кирлĕ таранах кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, минераллă удобренисем кÿрсе килнĕ, 30 гектар çине юр тытса хăварнă.

Çулпуçăн чĕнĕвĕпе хавхаланса, вуншар колхозниксем вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхпа ĕçлеççĕ. 5-мĕш бригадăн членĕсем Шемякина, Кошкин т. ыт. юлташсем вăрлăх сортлас ĕçе ир пуçласа тĕттĕм пуличченех туса пыраççĕ. Тимĕрçĕ Перваленко юлташ 41 плуг, 6 сеялка, 14 сÿре юсаса лартрĕ. Вăл кĕске вăхăт хушшинче тимĕрçĕ ĕçне икĕ çамрăка вĕрентрĕ, вĕсем халĕ юнашар колхозсенче ĕçлеççĕ.

Колхоз пĕлтĕр кашни гектартан вăтам шутпа 13 центнер тĕштырă туса илнĕ. Çулпуçăн приказне ответлесе, колхозниксем кăçал кашни гектартан 14-шар центнер тĕштырă туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Асхвари «Хĕрлĕ хĕм» колхоз та çуракине кăтартуллăн хатĕрленсе çитрĕ. Ку колхоз районра удобренисемпе усă курас тĕлĕшпе палăрса тăрать. Кăçал та уя 9.000 лав тислĕк кăларчĕ, Канаш хулинчен 366 лав фекали турттарса килчĕ тата 206 гектар çине юр тытса хăварчĕ. Калчасене апат пама колхоз 189 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата 200 центнер кĕл пухса хатĕрлерĕ. 16 тонна минераллă удобрени кÿрсе килнĕ. Колхоз çителĕклĕ таранах вăрлăх хывса хăварнă, сортланă. Вăл шутран 40 центнер пăрçана пĕрчĕн-пĕрчĕн суйласа тасатнă. Халĕ хĕрсех ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсене юсаççĕ.

Йăлмаччари «Первое мая», Вăтакас Татмăшри Чкалов ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсенче те çуракине хатĕрленес ĕç пĕлтĕрхинчен чылай лайăхрах пулса пырать.

Гр. Михайлов.

Вăрман хатĕрлевĕнче фронтри пек ĕçлемелли икĕрнелĕх

Чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес ĕçе хăвăртлатмалла

Республика вăрман хатĕрлевĕнче юлса пынине пĕтерес шутпа, ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ мартăн 1-мĕшĕ 15-мĕшĕ хушшинче вăрман хатĕрлевĕнче фронтри пек ĕçлемелли фронтовой икĕрнелĕх ирттерме йышăннă.

Çак икĕрнелĕхре чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлессе турттарасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Пирĕн республика чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли плана мартăн 7-мĕшĕ тĕлне хатĕрлес енĕпе 65,5 процент, турттарас енĕпе 56,8 процент çес тултарнă.

Ку тĕлĕшпе Вăрнарпа Канаш леспромхозĕсем начар мар ĕçлеççĕ. Вăрнар леспромхозĕ (директорĕ Сазанов юлташ) мартăн 7-мĕшĕнче чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли сезонри плана 97,4 процент, турттармалли плана 100,4 процент тултарнă. Фронтовой икĕрнелĕх пуçланнăранпа вăл вутă хатĕрлес енĕпе 9 процент, турттарас енĕпе 7,4 процент ÿсĕм тунă. Вăрнар районĕ чугунçул транспорчĕ валли вутă турттармалли плана срокчен тултарнă. Вăл мартăн 7-мĕшĕ тĕлне плана вутă хатĕрлес енĕпе 122,6 процент, турттарас енĕпе 111,3 процент тултарнă.

Анчах чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесе турттарас енĕпе леспромхозсене пурте пĕр пек ĕçлемеççĕ. Хăшĕ питех те сÿрĕк ĕçлеççĕ-ха. Кирĕк механизациленĕ вăрман пункчĕ (директорĕ Германов) мартăн 7-мĕшĕ тĕлне плана вутă хатĕрлес енĕпе 36,3 процент, турттарас енĕпе 27,2 процент çес тултарнă. Шăмăршă леспромхозĕ (директорĕ Смирнов) плана хатĕрлес енĕпе 48,2 процент, турттарас енĕпе 38,4 процент çес, Алтышево леспромхозĕ — хатĕрлес енĕпе 48,6 процент, турттарас енĕпе 46,5 процент çес пурнăçланă.

Чугунçул транспортне вутă хатĕрлесе тата турттарса парас тĕлĕшпе Шăмăршă, Кувакино, Чкаловски, Тăвай, Хĕрлĕ Чутай районĕсем государство умĕнче пысăк парăмра тăраççĕ. Асăннă районсем чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес ĕçе фронтовой икĕрнелĕхре те кирлĕ пек хăвăртлатаймарĕç. Мартăн 7-мĕшĕ тĕлне Шăмăршă районĕ вутă хатĕрлемелли плана 33,6 процент, турттармалли плана 22,3 процент çеç тултарнă.

Шăмăршă, Чкаловски, Хĕрлĕ Чутай районĕсем ĕç тата турттăм вăйĕ çитеймесĕр парса тăраççĕ. Шăмăршă районĕнче, сăмахран, мартăн 7-мĕшĕнче вăрманта хатĕрлекенсем 150 çын, турттаракансем 117 çын ĕçлемелле пулнă пулсан, хатĕрлекенсем пĕтĕмпе те 83 çын, турттаракансем 68 çын çеç ĕçленĕ.

Тăвайпа Кувакино районĕсем юлашки вăхăтра ĕç тата турттăм вăйĕ çитеймесĕр таранах парса тăма пуçларĕç пулин те, плана пурнăçлас çĕре юлса пырассине пĕтереймерĕç-ха. Тăвай районĕ плана вутă хатĕрлес енĕпе 30,6 процент, турттарас енĕпе 22,5 процент çеç тултарнă.

Хĕрлĕ Чутай районĕ пирки уйрăмах чарăнса тăма тивет. Унти райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ халĕ те чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес ĕçе хăй тĕллĕн пулса пыма ирĕк парса пурнаççĕ-ха. Районти пуринпе кулленех вăрманта хатĕрлекенсем 90 çын, турттаракансем 140 çын ĕçлемелле пулсан, фронтовой икĕрнелĕх пуçланнăранпа ку хисеп чакнăçемĕн чакса пырать. Фронтовой икĕрнелĕх пуçланас умĕн — февралĕн 28-мĕшĕнче районта вутă турттарма 64 лав янă пулсан, мартăн 7-мĕшĕнче пĕтĕмпе те 19 лав çеç янă. Çапла вăрман пунктне мартăн 4-мĕшĕпе 7-мĕшĕ хушшинче çеç вутă хатĕрлеме 114 çын, турттарма 373 лав планпа пăхнинчен сахалтарах панă.

Чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес ĕç çине çакнашкал ответсăррăн пăхассине халех пĕтермелле. Хăшпĕр районсем чугунçул транспорчĕ валли турттăм тата ĕç вăйĕ çитеймесĕр парса тăраççĕ çеç мар, вăрман ĕçлеме янă çынсене таранах те йĕркеллĕн ĕçлеттерсе тăраймаççĕ. Çавна пула, республикăра вутă хатĕрлеме тата турттарма ĕç вăйĕ чакса пыни курăнать. Мартăн 4-мĕшĕнче вутă касса хатĕрлекенсен хисепĕ 75 çын, турттаракансен хисепĕ 95 çын чакнă, мартăн 7-мĕшĕнче вăрман хатĕрлекенсен хисепĕ 455 çын, турттаракансен хисепĕ 377 çын чакнă.

Çак çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерсе, вăрман хатĕрлевĕнче фронтри пек ĕçлемелли икĕрнелĕхе чан-чăн фронтри пек хăвăрт ĕçлер!

МТС совечĕ СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) постановленине сÿтсе-явать

ЕТĔРНЕ, мартăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «МТС-сен тракторĕсене, комбайнĕсене тата ялхуçалăх машинисене 1943 çулти уйхир ĕçĕсенче ĕçлеме хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановлени пичетленнĕ хаçатсене илнĕ хыççăн, Етĕрне МТС-ĕ хăйĕн совечĕн ларăвне туса ирттерчĕ. Ларăва МТС ĕçлекен колхозсен председателĕсем пухăнчĕç. Совет çураки умĕн тракторсем валли кирлĕ горючие вуна кун хушшинче турттарса килме йышăнчĕ. Горючи турттарса килме колхозсен лашисене уйăрса пачĕç. МТС-а машинăсем лартмалли сарайсем тума пулăшас ыйтăва пур колхозсен председателĕсем те кăмăлласа йышăнчĕç.

Н. Щетинин,
МТС директорĕ.

Тата тухăçлăрах ĕçлеме пулчĕç

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). Иртнĕ çулта Тельман ячĕпе тăракан колхозра комсомолецсемпе çамрăксем ывăнма пĕлмесĕр, хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлерĕç. Фронтри пек хастарлăн ĕçленипе вĕсем, йывăрлăхсене пăхмасăр, иртнĕ çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене начар мар вĕçлерĕç.

Комсомолецсемпе çамрăксем кăçалхи çуракине те тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Ялхуçалăх машинисене февралĕн 15-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтернĕ. Комсомолецсем плугсене, сеялкăсене, сÿресене тата транспорт инвентарьне мĕнле пахалăхпа юсанине тĕрĕслесе тухрĕç. Колхозăн 40 плуг, 45 сÿре, зиг-заг сÿресем 18, 2 сеялка пур. Вĕсене пурне те юсаса лартнă.

Вăрлăхсем хатĕр. Планран ирттерсе 180 центнер вăрлăх хывса хăварнă. Вĕсене сортласа тасатнă, акмалли кондицине çитернĕ.

Комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем хăйсен вăйĕпе кăçал колхоз хирне 1.151 лав тислĕк кăларнă, 433 гектар çинче юр тытса хăварнă, 169 центнер кĕл, 150 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 118 центнер фекали пухса хатĕрленĕ.

Лашасене конюхсем мĕнле пăхнине комсомолецсем кулленех тĕрĕслесе тăраççĕ. Ку тĕлĕшпе контрольнăй постсем тунă. Çураки вăхăтĕнче лашасене çитерме клевер, утă çителĕклĕ таран тата 1.200 пăт посыпка хатĕрленĕ. Халь çамрăк тихасене ĕçе вĕрентеççĕ. Ку ĕçе комсомолецсем хăйсем çине илнĕ, пурĕ 20 тихана ĕçе вĕрентеççĕ.

Çак кунсенче комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем Верховный Главнокомандующи Сталин юлташăн приказне сÿтсе-яврĕç. Мускав облаçĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем чĕнсе каланине вуларĕç. Çакăн хыççăн колхозри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем уя тислĕк кăларас, выранти удобренисене пухас ĕçе татах вăйлатма пулчĕç. Агрокружок организацилерĕç. Кашни комсомолецпа союзра тăман çамрăк кружокра ялхуçалăх ĕçне вĕренет. Нумаях пулмасть комсомолецсем 10-шар килограмран кая мар çĕрулми тăррисем касса хатĕрлеме обязательство илчĕç.

Ялхуçалăх машинисене юсаççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Çуракине тухас вăхăт çывхарса килнĕ май, Буденный ячĕпе тăракан колхозра ялхуçалăх машинисене юсас ĕç хăвăрт пулса пырать. Вата тимĕрçĕ Е. Филимонов юлташ хăйĕн çамрăк молотобоецĕпе А. Федоров юлташпа пĕрле куллен 5—6 плуг юсать. Пĕр эрне хушшинче вĕсем плугсене пурне те юсаса лартрĕç, халĕ сеялкăсене юсаççĕ. Вĕсем мартăн 15-мĕшĕ тĕлне колхозăн ялхуçалăх машинисене пурне те юсаса пĕтерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Н. Виноградов.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Малтанхи утăмсем

Эпĕ—Совет Украининчен. Чăваш республикине отечественнăй вăрçă пуçлансан, эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ. Кунта çитсенех «Путь Маркса» колхозра ĕçлеме кăмăл турăм.

«Путь Маркса» колхоз, вăрçă йывăрлăхĕсене çĕнтерсе, пĕлтĕр тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртрĕ. Анчах уборка вăхăтĕнче комсомол организацин ĕçĕ пачах курăнмарĕ. Çавна пула эпĕ малтанах колхозра комсомол организацийĕ çук пуль тесе шутларăм. Чăнах, колхозра пĕтĕмпе те икĕ комсомолец çеç пулнă: комсомол ретне вĕсенчен пĕри счетоводсен курсĕнче вĕреннĕ чухне, тепри—хулара кĕнĕ. Çапла вара колхоз çамрăкĕсен хушшинче пĕр комсомолец та пулман. Çакă мана питех те тĕлĕнтерчĕ. Эпĕ ВЛКСМ райкомне кайрăм. Секретаре колхозра комсомол организацийĕ организацилеме май пурри çинчен каласа патăм: колхозра манпа 3 комсомолец-çке!

Райкомра килĕшрĕç. Колхозра комсомол организацийĕ турăмăр. Мана пуçламĕш организацин секретарьне суйларĕç. Икĕ уйăх хушшинчех пирĕн организацине çĕнĕрен 10 çамрăк хутшăнчĕ. Çамрăксен комсомола кĕрес шухăш-кăмăлĕ ÿсрĕ, вĕсем колхоз производствинче активлăн хутшăнса ĕçлеме тытăнчĕç.

Комсомолецсен пухăвĕнче колхоз çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен колхоз председателĕн отчетне итлеме шутларăмăр. Чăнах, малтан колхоз председателĕ çамрăксен пухăвĕнче отчет тăвасшăнах пулмарĕ. «Мана эсир мар, районра та отчет тума ыйтман-ха», терĕ. Анчах вăл комсомолецсен пухăвĕнче отчет турĕ-турех. Кун хыççăн эпир уйĕç бригадисен бригадирĕсемпе таччăнрах çыхăнса ĕçлеме тытăнтăмăр, агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пыма комсомолецсене уйрăм бригадăсем çумне çирĕплетрĕмĕр.

Ферма начар ĕçлетчĕ. Лаша витинче йĕркелĕх çукчĕ. Эпир унта та комсомолецсене çирĕплетрĕмĕр, йĕркелĕх турăмăр.

Хăшпĕр колхоз председателĕсем колхозра ертсе пырас ĕçе комсомол организацийĕсем хутшăннине хăнăхман. Пирĕн председатель те малтанхи вăхăтра çавăн пекчĕ. Каярахпа, комсомолецсем ăна колхоза ертсе пырас ĕçре вăйлăн пулăшса тăма тытăнсан, вăл лайăхланчĕ, пире ăнланакан пулчĕ.

Халĕ хĕрсех çуракине хатĕрленетпĕр. Çуракине ирттермелли план турăмăр. Пирĕн комсомолецсем плугарьсем, сÿрекенсем тата акакансем пулса ĕçлеççĕ. Лашасене çураки валли хатĕрлесси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхатпăр. Лашасене пăхас ĕçри обезличкăна пĕтерес тесе, кашни комсомолеца 5—10 лаша уйăрса патăмăр. Вĕсем пирĕн халлĕхе ырхантарах-ха. Комсомолецсем лашасене мăнтăрлатассишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ. Пĕр вăхăтра конюхсем лашасене вăхăтра апат памасчĕç, шăвармасчĕç. Шыв шăвармалли вăлашка юхатчĕ, хăшпĕр конюхсем вырăх апатне хăйсем валли тытса юлма пăхатчĕç. Эпир çак çитменлĕхсене палăртрăмăр çеç мар, вĕсене тĕппипех пĕтертĕмĕр.

Эпир халĕ ĕçе тухман колхозницăсем хушшинче ĕçлессине вăйлатрăмăр. Кунпа пĕрлех фронтовиксен çемьисене пулăшма тытăнтăмăр. Фронтовиксен çемьисене 4 пăру, сысна çурисем туянма пулăшрăмăр. Вăрмантан вутă турттарса парса пулăшрăмăр. Вĕсем пирĕн çинчен фронтри упăшкисем патне çырса пĕлтернĕ иккен, фронтовиксем комсомолецсене тав туса çыру ячĕç, ирсĕр тăшмана хирĕç татах та хаяррăнтарах çапăçма пулчĕç.

Авторитетлă пулас пулсан, комсомол организацин тата унти комсомолецсемпе комсомолкăсен хăйсен нумай ĕçлемелле. Çавăнпа пирĕн комсомолецсем колхозри мĕнпур ĕçсене хутшăнаççĕ, ĕçре малта пыраççĕ. Колхозниксем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне лайăхрах туса пыма пуçларăмăр. Колхозниксене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, партипе правительствăн решенийĕсене вăхăтра ăнлантарса паратпăр. Халĕ хаçат витрини турăмăр. Спектакльсем лартатпăр, пуханнă укçана оборона фондне хыватпăр.

Шкул ачисем те колхоз производствине активлăн хутшăнаççĕ. Кашни шкул ачи 15-шер витре кĕл пухнă, шкул ачисем халĕ кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Пирĕн колхоз акмалли вăрлăха, сĕлĕ вăрлăхĕсĕр пуçне, ытлашшипех хатĕрлесе хучĕ. Пирĕн урпа ытларах, çывăхри колхозсенче сĕлĕ вăрлăхĕ пур, çак кунсенчех улăштарас тетпĕр.

Колхоз халĕ 1943 çулхи обязательствăсен шучĕпе государствăна 1000 çăмарта ытла пачĕ.

Эпир çитес çулхи вăйлă тырпулшăн çине тăрса кĕрешетпĕр. 1943-мĕш ялхуçалăх çулĕнче колхоза районри малта пыракан колхозсен ретне тăратасси — пирĕн комсомол организацийĕн хисеплĕ задачи.

ЕЛЕСИНА,
ВЛКСМ пуçламĕш организацин секретарĕ.
Куславкка районĕ, «Путь» Маркса» колхоз.

Колхоз пурнăçĕпе интересленмен çĕрте

СĔНТЕРВАРРИ. Комсомолăн Сĕнтĕрпуçĕнчи пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Иванов) колхоз производствипе интересленмест. Комсомолецсем колхозниксем хушшинче политикăллă агитаци ĕçне туса пымаççĕ. Пуçламĕш организацин секретарĕ Иванов комсомолецсем хушшинче ĕçлемест. Пухусене йĕркеллĕ ирттермест. Вăл стена хаçат редакторĕ те пулса тăрать. Анчах иртнĕ çултанпа пĕр номер стена хаçачĕ те кăларман.

П. Кузнецов.

Ют çĕршывсенче

ХĔÇПĂШАЛА КИВÇЕН Е ТАРА ПАРАС ЗАКОНА ПАСНИ ÇИНЧЕН

США конгресĕнче хĕçпăшала кивçен е тара парассине малалла тăсас Законпроекта сÿтсе явнă май сенатăн ютçĕршыв ĕçĕсен комиссийĕнче Стеттиниус сăмах тухса каланă, вăл çав закона пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăй пулса тăрать. Хăйĕн докладĕнче вăл хĕçпăшала кивçен е тара парас принцип тăрăх Пĕрлешÿллĕ Штатсем союзлă çĕршывсене епле пулăшни çинчен чарăнса тăнă.

Совет Союзне хĕçпăшал тăратни çинче чарăнса, Стеттиниус çапла каланă: гитлерла çара чарса унтан сирсе ярас тĕлĕшпе Хĕрлĕ Çар усă курнă хĕçпăшалăн пысăк пайне совет завочĕсем хăйсем тунă. Çакăнпа пĕрлех США-па Англия 16 уйăх каярах Совет Союзне хĕçпăшалсем тата материалсем ярса пулăшма тытăнчĕç. Тăшмана çапса çĕмĕрес тĕлĕшпе çав хĕçпăшалсемпе материалсем хăйĕн ĕçне, халлĕхе пысăках-марскерне, турĕç. «Ку таранччен те, — тенĕ Стеттиниус,—совет халăхне çителĕклĕ таран материал парайманха». Совет Союзне тăратакан материала ÿстерес тĕлĕшпе пирĕн мĕн тумаллине пурне те тумалла.

Стеттиниус каланă тăрăх, хĕçпăшала кивçен е тара парас закон тăрăх Совет Союзне панă материалсем халĕ, кăçалхи январĕн 1-мĕшне çитиччен, 1 миллиард та 300 миллион долларлăх пулнă.

Англие тăратнă материалсем çинчен Стеттиниус çапла каланă: хĕçпăшала кивçен е тара парас закон тăрăх кăçалхи январĕн 1-мĕшĕччен Англие тĕрлĕ материалсем 2 миллиард та 440 миллионлăх панă, тенĕ.

(ТАСС).

ГЕРМАНИ ФЛОТĔНЧИ ТАСАТУ

ЛОНДОН, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Германи флочĕн çĕнĕ командующийĕ адмирал Ленц флотри комсостава тасатать. Халлĕхе 16 адмирала ĕçрен кăларнă.

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ РУАН ТАТА РЕНН ХУЛИСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, мартăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 8-мĕшĕнче, кăнтăрла, Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем тăшманăн Руанри тата Реннри объекчĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă.

Пĕлтерÿ

Мартăн 11-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Горкомĕн Парткабинетĕнче (Чувашская ур., 6) агитколлективсен руководителĕсем, агитаторсем тата докладчиксем валли **МОПР кунĕ тата Париж Коммуни»** темăпа инструкциллĕ доклад пулать.

Докладчик — ВКП(б) Горкомĕн лекторĕ **И. И. Шапиро** юлташ.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Пирĕн земляксем

Снайпер

Çак кунсенче эпĕ пĕр лейтенантпа паллашрăм. Унăн ячĕ-хушамачĕ: Григорьев Федор Павлович. Сăмах хыççăн сăмах тупăнчĕ: калаçнăран каласса кайрăмăр. Нумай пулать чăваша курманччĕ, нумай пулать чăвашла калаçманччĕ. Чăвашпа чăваш чăвашла калаçать: эпир иксĕмĕр те—чăвашсем. Эпир иксĕмĕр те—вăрçăра, пĕр фронтра.

Пĕр-пĕрне ăçтисемне каласа патăмăр.

— Эпĕ Нарсписен, Сетнерсен çĕршывĕнчи чăваш, Слакпуç çынни,—каласа парать чăваш ывăлĕ Федор Григорьев.

* * *

...Федор Павлович вăрçăччен шофер пулса ĕçленĕ. Халĕ вăл—хастар командир, пирĕн паллă снайпер. Хĕрĕх те пĕр кун хушшинче çак снайпер аллă тăватă фашиста вĕлернĕ. Унăн ученикĕсем: тутар Ахмедзянов 30 фашиста вĕлернĕ, украинец Квитко—10, вырăс Ветчинкин—9. Çĕр те виçĕ фашиста вĕри пуля хыптарнă вĕсем.

— Паллă снайпер,—теççĕ кунта Григорьев юлташ çинчен.

* * *

...Унăн ĕçĕ акă мĕнле пуçланса кайнă. Иртнĕ çулта июнь уйăхĕн пуçламăшĕнче Федор Григорьев ирхине ирех тухнă та снайперсен постне йышăннă. Çак кунхине малтанхи нимĕçе персе вĕлернĕ вăл. Нимĕçсем траншея чавнă. Пушă пучах катаранах курăнать тенĕ пек,—пĕр чăсланкка, тăрнаккай та вата фриц курнах кайнă, снайпер куçĕ тĕлне пулнă вăл. Пĕрре çĕкленнĕ, пĕрре пĕшкĕннĕ фриц. Лайăх асăрханă ăна Григорьев. Акă тепре çĕкленнĕ çак фриц, пĕшкĕнме ĕлкĕреймен... Шăпах çак самантра ĕнтĕ тĕл перекен пăшал пульли нимĕçе хăлха чиккинчен пырса вăрканнă. Ытти фрицсем вара, вăрăсем пек, ун-кун пăхса илнĕ те, çĕр чавма пăрахса, хăйсен шăтăкĕсене кĕрсе пытаннă.

Çакăн чухне ĕнтĕ пуçланса кайнă Григорьев юлташăн снайперла ĕçĕ. Нимĕç вăрă-хурахĕсене хаяррăн тавăрнă вăл,—пирĕн Тăван çĕршыва ирсĕррĕн тапăннăшăн, унăн илемлĕ хулисене, улмуççиллĕ ялĕсене çунтарнăшăн, шкулĕсене, музейĕсене, чиркĕвĕсене лапăртанăшăн, унта кĕре-кĕре хăснăшăн тавăрнă вата асаттесене, кинемейсене, тăван маçака, мамака вĕлернĕшĕн, тин çеç кайăк чĕппи пек чĕвĕлтетме вĕреннĕ ачасене вута тытса пăрахнăшăн тавăрнă, инкесене, колхоз хĕрĕсене, сар каччăсен савнийĕсене намăслантарнăшăн тавăрнă.

* * *

— Кашни снайперăн,—тет Григорьев юлташ,—хăйĕн мелĕсем пур, тăшмана улталама пĕлес пулать.

Чăнах та, снайпер Григорьев тăшмана хирĕç мĕнле кĕрешет-ха? Мĕнле-ха унăн снайперла перес мелĕсем? Вăл мĕнле „сунарçа-ха"? Халĕ нимĕç салтакĕсем пирĕн пăшалăн вăйне сиссе çитрĕç, хăйсен ĕнсисем çинче тÿссе курчĕç,—вĕсем пирĕн снайперсенчен питех те хăраççĕ, пытанса, упаленсе çÿреççĕ... Çапах та, çапах та снайперсем вĕсене тупаççĕ, персе тивертеççĕ, вĕлереççĕ.

Кашни снайперăн, Григорьев калашле, мел, ăстай пур. Снайпер шаблон тăрăх мар, хăй сăнаса пĕлнĕ майсемпе усă курать.

...Калăпăр, ытарма çук лайăх çанталăк тăрать. Хĕллехи кунсем уçă та янкар. Катаран-катаран кармашса сарă хĕвел пăхать. Унăн ылттăн çуттипе шурă юр çинче пин-пин мерчен çиçсе тăрать. Çул çинчи хура пăнчă, пĕчĕккĕ пулин те, инçетренех курăнать. Сас-чĕв таçтанах илтĕнет.

Çакăн пек кунсенче снайпер Григорьев „ухутана" ир çинче ирех тухать.

...В. вăрманĕсем хыçĕнчен кăвак шуçăм кăваккăн кăвакарса килет. Çăлтăрсем тÿпере тин çеç сÿнме тытăнаççĕ. Вăрçă шавĕ пĕрре шăпланать, пĕрре ахăрса илет. Хушăран автоматсен типĕ сасси шатăртататать. Таçти уçланкăран тупă перет. Малтан çутти курăнать, унтан сасси илтĕнет.

Вĕлтĕрен пек çил вĕрсе илсен, пит-куç шăнать те пĕçерет. Тар шăрши кассăн-кассăн килет. Капăр вăрман юрă чăрăшсем çинчен пĕрчĕн-пĕрчĕн тăкăнать. Кăтра хурăнсем, çирĕксем, вĕтĕ-вĕтĕ çÿçесем, юрпа витĕнсе ларнă хырсемпе чăрăшсем, лутра урттăшсем, вĕскĕн ăвăссем хăйсен сăнарне палăртма пуçлаççĕ. Шăнса пăрланнă шурлăксенчи хăмăш-хăяхсем, хăшăл-хăшăл хăшăлтатса, хăйсен юррине юрлаççĕ.

Çак вăхăтра снайпер Григорьев хăйĕн постне йышăннă ĕнтĕ. Акă пĕр сехет иртет, икĕ сехет те иртет,—снайпер çаплах унта пытанса выртать. Юр та шурă, вăл та шурă. Ун çинче шап-шурă халат.

Çĕлĕкĕ те, кĕрĕкĕ те, çăматти те курăнмасть. Винтовки те шурă, ăна шурă пирпе чĕркенĕ.

Снайпер шăнать те, кÿтет те,—çапах те вырăнтан тапранмасть.

Акă хĕвелтухăçĕ вăраххăн хĕрелме тытăнать, каç тĕттĕмĕ саланса, çухалса пĕтет...

— Вырăс салтакĕсем çывăраççĕ пулĕ-ха, халĕ снайпер вăхăчĕ мар, тесе шухăшлаççĕ нимĕçсем,—тет Федор Павлович.—Эпир вара „ухутара" пĕрин хыççăн теприне шаккатпăр...

Çак „сунарçă", фрицсем вырăнне мулкачсем тытнă пулсан, вĕсене—пĕрне сылтăм енне, теприне сулахай енне, виççĕмĕшне çурăм хыçне çакса килнĕ пулĕччĕ. Анчах та вăл вăрман кайăкĕсене мар, ик уаллă тискер кайăксене пере-пере вĕлерет.

Çак тискер кайăксен ячĕ: нимĕç. Вĕлер нимĕçе!—тет Çĕршыв.

... Тул çутăлса çитсен вара, хăш чухне икĕ нимĕç, тепĕр чухне виçĕ нимĕç персе ÿкернĕ хыççăн, снайпер Григорьев хăйĕн юлташĕпе пĕрле каялла тавăрăнать.

* * *

... Хĕллехи кун питех те кĕске, пĕр командир сăмахĕпе калас-тăк, пĕрре лайăххăн кăшкăрса илмелĕх те çук. Хĕвел аран-аран тухать те часах каçалла сулăнать. Анчах фронтра каç та, ир те—вăрçă, кăнтăрла та, çĕрле те—пăшал, тупă сасси.

Акă хĕллехи каç пуçланать. Ни çутă, ни тĕттĕм. Çак вăхăтра пирĕн „сунарçăсем" каллех „ухутара". Каллех фрицсене шаккаççĕ вĕсем.

Каç çывхарса çитсен, лейтенант Григорьев таврăнать. Çĕрпÿртре вара хăйĕн кунĕ çинчен майĕпен каласа парать.

— Нимĕçсене шырама пĕлес пулать. Халĕ вĕсем арлансем пек пурăнаççĕ, çĕр чавса, çĕр айне пытанчĕç...

— Çапах та тупатпăр вĕсене—хутшăнать Ахмедзянов.

— Паян акă лейтенант юлташ пиллĕк фрица виçшер метр çĕр пачĕ,—пĕлтерет Григорьевăн юлташĕ.

... Паянхи ир çĕтĕк-çатăк фрицсем траншея тăрăх пĕрене йăтса пынă. Малтарахра çара вулăллă йывăç—пирĕн снайперăн ориентирĕ. Çак йывăç тĕлне çитсенех малта пыракан нимĕçе снайпер пульли çитсе вăрканнă та. Тепĕр нимĕçĕ, мĕн тунине тÿрех ăнланаймасăр, пĕренине те пăрахайман. Снайперăн ăна валли те пуля хатĕр!

— Ме, сана, ирсĕре, вĕри çăмах!—тенĕ те Григорьев пăшалне персе янă. Нимĕç патне совет пульли часах шăхăрса çитнĕ. Нимĕç тайкаланса, йăванса ÿкнĕ, вилсе выртнă. Ун çине пĕрене персе аннă.

Икĕ ирсĕр, пыйтăллă, шăршлă, вилĕ кĕлетке патне чанккама фриц чупса çитнĕ. Снайпер хĕпĕртесе:

— Манăн сана валли те кучченеç пур!—тенĕ вăхăтра нимĕç бинокль çĕкленĕ те пирĕн еннелле пăхма тытăннă. Снайпер вăраххăн: „Ме!" тенĕ те çавăн пекех вăраххăн винтовка курокне пуснă. Икĕ фриц çине виççĕмĕшĕ чикеленсе ÿкнĕ. Вĕсем патне тăваттăмĕшĕ, хăйĕн юлташĕсене пулăшас тесе, пĕшкĕне-пĕшкĕне чупса çитнĕ.

Çакăн хыççăн вара тăшман çилленсе çитнĕ те пулеметпа, минометпа, тупăпа пеме тытăннă...

— Анчах та,—тет Григорьев çак вăхăта аса илсе,—манăн „ухута" кунпах пĕтмерĕ-ха. Эпĕ малтан пытанса лартăм, çилленсе тарăхакан тăшман шăплансан, каллех снайпер ячейкине йышăнтăм. Мана нимĕç пулеметчикĕ сыхланă мĕн. Пульăсем шăхăра-шăхăра вĕçеççĕ. Каялла кайма çук. Тĕллерĕм те пулеметчик çине, персе ятăм. Тивертеймерĕм. Нимĕç тата та хытăрах пеме тытăнчĕ. Тепĕр хут петĕм. Ах, мур илесшĕ, каллех тивретеймерĕм. Нимĕç вĕçĕмсĕр персе тăрать. Виççĕмĕш хут персе ятăм. Тинех нимĕç йăванса анчĕ, ун пулемечĕ шăпланчĕ...

— Ку миçемĕшĕ?—ыйтрĕ Ахмедзянов.

— Паянхипе шутлас-тăк—пиллĕкмĕш нимĕç!

— Пĕтĕмпе миçе?—интересленчĕ Ветчинкин.

— 54.

* * *

Çакăн пек çапăçать чăваш ывăлĕ Федор Павлович Григорьев. Нимĕç оккупанчĕсене махха памасть вăл. Хисеплĕ воин вăл, хисеплĕ командир, паллă та чыслă снайпер.

— Эпир,—тет лейтенант Григорьев,—кунта совет халăхĕн пулас кунçулĕшĕн кĕрешетпĕр. Вырăс, тутар, пушкăрт, чăваш тата ытти халăхсен ирĕклĕ пурнăçне сыхлатпăр, аттесем çуралса çитĕннĕ, ватăлнă çĕршывăн телейĕшĕн, ачасем, пирĕн çамрăк çеçкесем, ÿссе çитĕнес çутă кунсемшĕн пĕтĕм вăя хурса çапăçатпăр!

В. ДОЛГОВ.
Действующи Арми.

Ответлă редактор Г. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.